"Единая Россия" партин кадрсен резервĕн кандидачĕ

# "Ял çынни хăй ял хуçалăх ĕçченĕ пулнипе мăнаçлантăр"

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

**ВУЛАКАНСЕНЕ АСА ИЛМЕ. Е.Г. Борисов 1980 çулхи мартăн 11-мĕшĕнче çуралнă. 1997 çулта хамăр районти Тивĕш шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Çав çулах РОСТО автошкула вĕренме кĕрет. 1998 çулхи май уйăхĕнчен пуçласа Евгений Çурçĕр Кавказри çар округĕн тип çĕр çинчи çарĕнче службăра тăрать. Гварди кĕçĕн сержант мотострелковăй полкăн инженерипе сапер ротин уйрăмĕн командирĕ пулнă. Çапла маневр ушкăнĕнче çапăçнă кунсене аса илме паян, тен, ăна çăмăлах та мар пуль. Анчах ун чухне ентешĕмĕрĕн шикленесси пирки шутлама та вăхăт пулман: боевиксем вырнаçтарнă 8 взрыв устройствине йĕркерен кăларать вăл. Çапла майпа нумай салтакăн пурнăçне, подразделенин çар техникине пĕтесрен çăлса хăварать.**

**1999 çулхи октябрь уйăхĕ унăн пурнăçĕнче ĕмĕрлĕх тарăн йĕр хăварать. Бронеушкăнăн çирĕп задача – боевиксен вут-çулăм тăкакан точкисене пĕтермелле. Пирĕн ентеш ларнă танк ял пуçне вирхĕнсе кĕрет. Çапла майпа танк экипажĕпе саперсем вут-çулăма хăйсем çине илсе, тĕп вăйсене умри задачăсене пурнăçлама май туса параççĕ. Ах, инкек: бандитсем гранотометран танка персе лектереççĕ. Анчах экипаж çухалса каймасть: Евгений боевиксем çине персе тăрать, ытти салтаксем çав хушăра танка строя тăратаççĕ. Анчах хаяр çапăçуран тĕрĕс-тĕкел тухаймарĕ çав ентешĕмĕр. Йывăр аманчĕ. Таврана каç сĕмĕ çапсан, икĕ хутчен вăрттăн пытаннă боевиксемпе çапăçăва кĕрет. Юн юхтарсах, ялтан тухса, хамăрăннисем патне çитме тăрăшать. Çав 4 талăкра мисе хутчен тăн çухатмарĕ пулĕ. Ал-урисене те тăм илнине, юн нумай кайнине пăхмасăр, малаллах – хамăр çарсем вырнаçнă çĕрелле талпăнчĕ вăл. Çĕршыв умĕнче тупа туни пирки пĕр самантлăха та манмарĕ.**

**РФ Президенчĕн 2000 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнчи Указĕпе килĕшӳллĕн Çурçĕр Кавказри çар регионĕнче саккунлă мар çар формированийĕсене пĕтернĕ чух хăюлăх тата паттăрлăх кăтартнăшăн гварди кĕçĕн сержанта Евгений Германович Борисова "Ылтăн Çăлтăр" медальпе пĕрле Раççей Федерацийĕн Геройĕ ят панă.**

– Пирĕн çĕршывра пурăнакансем юлашки вăхăтра ыранхи куна шанма пуçларĕç. Пирĕн пурнăç кунсеренех лайăхланса пырать. Çакна паян ял çыннисем те хăйсем çинче туйса илчĕç. Çакă йăлтах "Единая Россия" фракци пуçарăвĕпе пулса пырать. Ку партире халăха хăй ĕçлеме пултараслăхне ĕçпе çирĕплетнĕ эпир пурте пĕлекен авторитетлă çынсем. Акă, мĕншĕн суйларăм та ĕнтĕ эпĕ шăпах "Единая Россия" партие, – терĕ ентешĕмĕр эпĕ мĕншĕн вăл шăпах çак партие кĕни пирки ыйтсан.

**– Мĕнле шухăш-кăмăл çуралчĕ хăвăра асăннă партин пур шайри должноçсен резерв кадрне кĕртнине пĕлсен?**

– Мана шанни çинчен калать çакă. Çавăнпа та çак шанăçа тӳрре кăларас тесе хамран килнине йăлтах тăвăп. Раççей чи вăйлă çĕршыв пулмалла. Вăл ку енĕпе малтан малалла кайнине паян пурте лайăх пĕлетпĕр. Хула çыннисем çеç мар, ялта пурăнакансем те. Кашни килте паян сут çанталăк газĕ çунать. ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров (партин резерв кадрĕн çак списокĕнче вăл шăпах пĕрремĕш тăрать) тăрăшнипе паян пылчăкра пырса кĕме май çук ялсем патне те пĕрин хыççăн теприн патне асфальт çул сараççĕ. Ял çынни паян çак ĕçе ял хушшинче те тума тытăнасса шанса тăрать. Ял çынни паян патшалăх паракан çăмăллатнă кредитсемпе усă курса малалла аталанать. Мĕн тĕрлĕ медицина оборудованийĕпе пуянланмарĕ пулĕ паян пирĕн район больници те. Çамрăк çемьесене паян çиес килнине çимесĕр, тăхăнас килнине илмесĕр çурт лартма укçа пуçтарасси хăратмасть. Мĕн тĕрлĕ программа паян ку тĕлĕшпе çамрăксене майлă ĕçлемест пулĕ. Анчах та паян ял хуçалăхĕнче туса çитермеллисем татах та пурах. Çавсене татса памаллах. Вара тин ял хуçалăхĕн малашлăхĕ уçăмланĕ.

**– Эппин, Сирĕн малашнехи тĕллев паллă?**

– Ял проблемине татса памалла. Ялта паян çамрăксем валли ĕç çук. Эпĕ хам ялта çуралнăран çак проблема мана питĕ çывăх. Манăн ялпа çыхăну нихçан та татăлман. Атте çурчĕ халĕ те ларать унта. Кайсах тăратпăр яла. Ача чух Мичурин ячĕллĕ хуçалăх уйне ĕçлеме çӳреттĕм. Мана паян çак хуçалăх кирлĕ пек аталанайманни питĕ пăшăрхантарать. Ял çамрăкĕсен ĕçсĕрлĕхĕ шухăшлаттарать. Çамрăк специалистсем пур паян. Вĕсене агробизнеса явăçтармалла. Паян хуçалăхсене унăн пурлăхне кĕске вăхăтрах хап! тытса илекенсем мар, нумай çул халăхшăн чунне парса ĕçлекен ертӳçĕсем кирлĕ. Çĕрĕ çителĕклех, вылăх-чĕрлĕх пур. Ăна малалла ĕрчетме хăй ĕçне пĕлекен çамрăк специалистсем кирлĕ. Вĕсене, çамрăк çемьесене пурăнма мĕн пур условисем туса памалла паян. Культурăллă канма, сывлăха çирĕплетме мĕн пур условисем кирлех ялта. Вара ялăн малашлăхĕ те пулĕ, ял хуçалăхĕ те ура çине çирĕп тăрĕ.

**– Раççей Геройне "Герой" хуçалăхăн ĕçченĕсем ертӳçĕн çумĕн тилхепине тыттарни шăпах çак шухăшсене конкретлă тĕслĕхсемпе çирĕплетме ыйтнине пĕлтерет пулĕ? Мĕн тума пултаратăр Эсир асăннă хуçалăхшăн?**

– Ял çынни паян ир пуçласа каçчен ура çинче, анчах та вăл туса илнĕ продукци йӳнĕ. Çитменнине ăна вырнаçтарма та йывăрлансах пырать. Ман тĕллев – ял ĕçченĕсем туса илнĕ продукцие йĕркеллĕ вырнаçтарасси. Посредниксем урлă мар, тӳрремĕн вырнаçтарасси. Çапла майпа хуçалăх кассине туса илнĕ укçан пĕр пайĕ мар, ĕçлесе илни йăлтах кĕтĕр. Ял ĕçченĕн паян туса илнĕ продукцие мĕнле вырнаçтарас-ши тесе ыйхă килменни пулмалла мар. Вăл хăй ял хуçалăхĕнче ĕçленĕшĕн мăнаçланмалла пултăр, ыранхи куна пысăк шанăçпа пăхтăр. Акă, мĕн тумалла пирĕн.

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Шкулти хыпарсем

# Кĕçех – шкула!



**Хаваслă çу кунĕсем, шел пулин те, ӳкĕте кĕртмелле мар иртсе пыраççĕ.**

**Çу каçипе ачасем шыва кĕчĕç, аслисене утă пуçтарма тата ытти ĕçсенче самай пулăшрĕç. Çавăн пекех тĕрлĕ кану лагерĕсенче те канма май килчĕ вĕсен. Анчах... Анчах çуллахи хаваслă кунсем çав тери хăвăрт иртеççĕ.**

**Кĕçех ачасем парта хушшине ларĕç. Мĕнле кăмăлпа кĕтсе илеççĕ-ха ачасем çĕнĕ вĕренӳ çулне? Çак ыйтăва эпĕ Сыпай шкулĕнче вĕренекенсене патăм.**

– Манăн шкула каяс килет. Çĕнĕ кĕнекесемпе вĕренес килет. Эпĕ кăçал пиллĕкмĕш класа каятăп, – терĕ Юля Яковлева.

– Эпĕ хамăр класри ачасемшĕн тунсăхласа çитрĕм. Çулла вĕсене пурне те кураймастăп та, – çакăн пек хурав пулчĕ Максим Мешковăн.

Алена Яшкова: «Шкула каяс килет. Унта интереслĕ», – терĕ.

– Манăн шкула каяс килет те, каяс килмест те. Шкула кайма ирех тăрас пулать, – хăйĕн кăмăлне пĕлтерчĕ Дима Кожанов.

Мĕнех, шкула каяс килмест текенсене те ăнланма пулать пулĕ: хăй патне илĕртекен шыв, вăйă-кулă ачасене хăйсен ытамĕнчен вĕçертесшĕн мар. Анчах шкула кайма вăхăт.

Шкула каякансене пурне те манăн çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче ăнăçу сунас килет. Шкулти пурнăç сирĕн çуллахи пекех интереслĕ, тулли пултăр. Ăнăçу сире!

**Катя ЯКОВЛЕВА.**

Сыпай шкулĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре: каникул кунĕсемпе сыв пуллашма тивет.**

Астăвăм

# Çăмăл килмерĕ çĕнтерӳ

Паллах, çав вăхăта аса илме пĕртте çăмăл мар. 1942 çулхи август уйăхĕн 23-мĕшĕччĕ. Тăван çĕршывăн питĕ йывăр вăхăт. Вăрçă пырать. Тăшман Сталинград патне çитнĕ. Çĕрĕн-кунĕн çапăçусем пыраççĕ. Тăшманăн та, пирĕн салтаксен те сахал мар юн юхать. Ялсем çулăмра çунса кĕлленеççĕ.

Çав кун ун чухнехи Юнкă ял Советĕнчи 6 çамрăка вăрçă хирне кайма йыхрав хучĕсем панăччĕ. Çавна пĕлсен колхоз председателĕ Павел Иванович Суворов хуçалăх активне пухрĕ, харăсах пĕр кунта Юнкăпуç ялĕнчен 4 çамрăка вăрçă хирне ăсатни пулман тесе пире те унта чĕнчĕ, салтак тивĕçне чыслăн пурнăçлама, каялла сывă-чипер таврăнма ырлăх-сывлăх сунчĕ. Колхоз ячĕпе парне вырăнне тесе пурне те 500-шер тенкĕ укçа аларан тыттарчĕ.

Вăрçа каякансене ăсатма аслă конюх тройка уйăрса пачĕ. Уй-хирте хĕрӳ ĕç пырать пулин те, лашасемпех ăсатас терĕç. Юнкăпуç ялĕнчен эпир Михаил Ершов, Филипп Яндушкин, Валентин Яндимиркин тата эпĕ – Иван Васюхин 3 лаша кӳлнĕ урапа çинче тăрса салтак юрри юрласа урамсем тăрăх çӳрерĕмĕр, тăвансем, пĕлĕшсем патĕнче пултăмăр. Пирĕнпе пĕрлех вăрçа каякансем Елкино ялĕнчи Иван Гусевпа 1-мĕш Май выççăлккинчи Иван Мохнатов та пулчĕç.

Калама кăна çăмăл. Епле йывăр вăл тăван килтен, тăвансенчен уйрăлса вăрçă хирне тухса кайма. Ку вăхăта ялта вăрçă хирĕнче вилнисем е çапăçусенче хыпарсăр çухалнисем, аманса госпитале лекнисем пирки çырусем сахал мар килнĕччĕ ĕнтĕ. Пурпĕр эпир салтак шăпинчен пăрăнас шухăшлă пулман, ял-йышпа тăвансем умĕнче намăс курас темен.

Пĕр кун салтак ретне тăнисенчен тăваттăна артиллерист пулма юрăхлă терĕç. Манпа Филипп Яндушкина вара 15-мĕш мотоциклетнăй полка çирĕплетрĕç. Курсантсем пулса тăтăмăр. Салтака кайма юрăхлă пулнă пулин те, эпĕ ун чухне питĕ туртăнса çитĕнĕ темелле. Ман çӳллĕш 1 метр та 52 сантиметр, йывăрăш вара 52 килограмм та 600 грамм пулнă. Паллах, вăрçă хăрушлăхĕ шиклентерет пулин те, ялта велосипед çине те ларса курман çамрăка мотоцикл шанса пани савăнтарнах ĕнтĕ.

6 уйăх хушши вĕрентӳре пултăмăр. Вĕренӳ занятийĕсем тăшман танкĕсем хыççăн килекен мотоциклистсен çулне пӳлсе лартассипе те, тăшман тылне кĕрсе тустарассипе те, ытти енĕпе те нумай пулчĕç. Çĕрле час-часах тревогăсем парса та занятисем ирттерчĕç. Тепĕр чухне талăкĕпех хырчăрăш вăрманĕсенче лăсăсенчен тунă ӳплесенче пурăнаттăмăр. Çывăрма ирĕк памастчĕç, вут чĕртме юрамастчĕ.

Çапла вара 1943 çулта Хĕрлĕ Çар кунне уявлама хатĕрленнĕ вăхăтра пире пакунсем пачĕç, февралĕн 23-мĕшĕ ячĕпе саламларĕç, ырлăх-сывлăх сунчĕç. Ун хыççăн хăйсен килĕшнипе 60 салтака урăх вырăна куçарасси пирки пĕлтерчĕç. Вĕсем хушшине эпĕ те лекрĕм. Эпĕ Филипа та хампа пĕрле чĕнтĕм, анчах вăл килĕшмерĕ.

Пире кашниех 3 кунлăх типĕ паек пачĕç, тепĕр кунне вара пуйăспа Мускав еннелле çул тытрăмăр. Унта çитсен ял çамрăкĕшĕн курмалли-тĕлĕнмелли сахал мар пулчĕ. Метрона анса курни кăна мĕне тăрать. Сокольники станцине çитсен пире антарчĕç. Çĕр айĕнче тепĕр хула пур пекех туйăнчĕ. Унта вара чылай вăрăм çĕр пӳртсене вырнаçтарчĕç. Тепĕр кунне строя тăратса пурне те ятран тĕрĕслесе тухрĕç. Кунта пирĕн пата çамрăксем хушăнчĕç. Вĕсем хушшинче кĕçĕн командирсемпе офицерсем те пурччĕ.

Капитан званиллĕ офицера ялав пачĕç. Вăл ялава чĕркуçленсе чуп турĕ. Ун çине «83-мĕш уйрăм батальон» тесе çырнăччĕ. Хыççăн капитан ура çине тăрса хăйĕн командине итлеме хушрĕ, вăл çак батальон командирĕ пулассине, тăшмана тăван çĕр çинчен пирĕн пĕрле хăваласа кăлармаллине пĕлтерчĕ.

Кайран мунчана илсе кайрĕç. Тепĕр кунне вара Иваново облаçĕнчи Костерово станцине çити пуйăспа малалла кайрăмăр. Ку станцирен инçех мар вырнаçнă пĕр ялта кăштах тытăнса тăмалла пулчĕ. Горький хулинчи автомашина завочĕ пире валли мотоциклсемпе бронемашинăсем хатĕрлесе çитерейменччĕ. Кунтах тымар яратпăр ĕнтĕ тенĕччĕ батальон командирĕ. Хамăра кирлĕ техникăна июнь уйăхĕн пуçламăшĕнче кĕтсе илтĕмĕр. Техникăна уншăн ответлă пулăшакан тĕрĕсленĕ хыççăн (3 кун иртрĕ кунта) фронт еннелле çула тухрăмăр. Икĕ талăкран Урозово текен вырăна çитрĕмĕр. Фронт еннелле пыратпăр пулин те, хамăра савăнăçлă туятпăр. Пирĕн алăра М-72 мотоциклсем вĕт-ха. Мотоциклăн кӳми çинче пулемет пур, хыçра вара – автоматчик.

Кунта нумаях тытăнса тăмарăмăр. Июлĕн 4-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнчипех паллă Прохоровка текен вырăна çул тытрăмăр. Вырăна çитсен йĕркеллĕ вырнаçма та вăхăт пулмарĕ. Пирĕн батальон командирĕ пире строя тăратса кунта килекен генерала 83-мĕш батальон вырăна вăхăтра тата йĕркеллĕ çитни çинчен рапортларĕ. Генерал пурне те ырлăх-сывлăх сунчĕ, пирĕн алăра епле хăватлă техника пулнине, унпа нимĕнле тăшман та хăрушă пулманнине палăртрĕ.

«Эпĕ 3-мĕш танк корпусĕн командирĕ Попов генерал-майор пулатăп»,– терĕ вăл. Çак вăхăтран пуçласа 6 экипажа корпус штабĕнчи çыхăну офицерĕсем валли уйăрасси пирки пĕлтерчĕç. Вăл шута эпĕ те лекрĕм. Вĕсенчен пĕри Йошкар-Ола хулинченччĕ, иккĕшĕ Ленинград хулинченччĕ, тепри Мускавранччĕ. Тепĕрне астумастăп.

Çапла вара çапăçусене кĕтĕмĕр. Пĕрремĕш çапăçурах пирĕн батальон пысăк çухатусем тӳсрĕ. Тăшман пире хĕсмеллипех хĕсрĕ. Çанталăк питĕ шăрăхчĕ. Тӳпере кĕркуннехи кураксем евĕр нимĕç самолечĕсем явăнатчĕç. Сайра пулин те, пирĕннисен самолечĕсем те тӳпере нимĕç самолечĕсемпе тытăçăва кĕретчĕç. Çав хушăрах бомбăсем тăкăнатчĕç, танксем çунатчĕç, пĕлĕтре хĕвел те хĕрлĕ çаврашка евĕр курăнатчĕ. Нимĕçсем тапăнаççĕ те тапăнаççĕ. Нимĕн тума та çук, каялла чакас пулать. Çапла вара оборонăн 2-мĕш эшелонне чакса çирĕплентĕмĕр пулин те, çăмăлах килмерĕ. Нимĕçсем те çывăрса выртма шутламаççĕ. Ир пуçласа мĕн тĕттĕм пуличчен бомбăсем тăкаççĕ, снарядсемпе минăсем пуç çĕклеме те памаççĕ.

Июлĕн 15-мĕшĕнче пĕрремĕш хут амантăм. Бомба ванчăкĕ урана сиенлерĕ. Мана вара Калач хули çывăхĕнчи пĕр ялти госпитале вырнаçтарчĕç. 45 кун хушши сиплентĕм унта. Кайран вара сывалнисене 87 салтака саперсен полкне ăсатрĕç. 2 пĕчĕк вакуна вырнаçтарнăскерсем, 2-мĕш кунхине пĕр станцие çитрĕмĕр. Тӳрех нимĕç самолечĕсен бомбисем айне лекрĕмĕр. Пĕр бомби пĕрремĕш вакуна тӳрремĕн лекнине пула документсемсĕр юлтăмăр. Ирхине вара сывă юлнă 19 салтак каллех госпитале документсем патне çул тытрăмăр.

Çула май Лиски станцийĕнче пире пĕр чиперкке хĕр-салтак хăйсем патне зенитнăй артиллерие пыма сĕнчĕ. Документсене тĕрĕсленĕ хыççăн эпир пурте зенитчиксем пулса Дон шывĕ урлă хывнă чукун çул кĕперне нимĕç самолечĕсем бомбăсем пăрахса сиенлесрен сыхлама пуçăнтăмăр.

1944 çулхи март уйăхĕн вĕçĕнче пире, çамрăксене, каллех саперсен полкне ăсатрĕç. Кайран вара çапăçусенче нумай çухату тӳснĕ 58-мĕш стрелковăй дивизин 270-мĕш полкĕн 76 миллиметрлă полк орудийĕн номерĕ пулса тăтăм. Полк орудие çапăçу вăхăтĕнче çухатнине пула çĕнĕ оруди килессе кĕтсе вăхăт чылай иртрĕ. Тупăсемпе снарядсем килсен пире нумаях кĕттермерĕç, Волынь облаçĕнчи Горохов çывăхĕнчи пĕр ялтан инçех мар оборона йышăнтăмăр.

Июлĕн 13-мĕшĕнче ирхине пире тăшман оборони çине 3 минут хушши тупăсенчен персе тăма приказ пачĕç. Тăшман çывăрнă вăхăт тесе çапăçупа пĕрлех разведка ирттерме те пăхнăччĕ. Анчах тăшман 1-мĕш линирен 2-мĕш оборона линине куçма ĕлкĕрнĕ, пире тытса чарас шутпа контратакăна çĕкленчĕ. Пирĕн çывăхрах нимĕçсен снарячĕ çуралчĕ, тупă расчетĕнчен тӳрех 4 çынна стройран кăларчĕ. Эпир вара тупă расчечĕ патне пĕтĕмпе те виççĕн кăна юлтăмăр.

**И. ВАСЮХИН, ĕçпе вăрçă ветеранĕ.**

**(Малалли пулать).**